27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
9
ШАМАТКУН
178(6673) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ХУЛАСЕМПЕ ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ ХĔЛЕ ТĔПЛĔН ХАТĔРЛЕР

Çунасене çулла хатĕрле, тет халăх сăмахĕ. Çак сăмахсем вĕсем пурнăçран тухнă, вĕсем хĕлле ăнăçлăн ĕçлессине малтанах тĕплĕн хатĕрленни татса пани çинчен калаççĕ. Çавăнпа та, мухтавлă Хĕрлĕ Çара тĕрек парса тăракан совет тылĕ хĕллехи вăхăтра та лайăх ĕçлетĕр тесен, хуласемпе предприятисене, учрежденисене, коммуналлă хуçалăха хĕле тĕплĕн хатĕрлемелле.

Хĕле хатĕрленес тени вăл, чи малтанах, вутă кирлĕ таран касса хатĕрлессине пĕлтерет. Хĕллехи вăхăтра вутă халăх хуçалăхĕн пур отраслисене те — промышленноçпа транспорт предприятийĕсене, государствăпа çутĕç тата медицина учрежденийĕсене, пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăха та кирлĕ. Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, кăмрăкпа торф тата вутă боеприпассем вырăнĕнче шутланаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ партипе совет организацийĕсен вутă тата торф хатĕрлесси çинчен пĕр минутăлăха та манма юрамасть.

Хуласемпе поселоксем, предприятисемпе учрежденисем хăйсене кирлĕ вутта хăйсен вăйĕпе хатĕрлеççĕ. Хулара, предприятире вутă çителĕклĕ пуласси пĕтĕмпех партипе совет организацийĕсен, предприяти руководителĕсен пуçарулăхĕпе тимлĕхĕнчен килет. Вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕç вăйĕ çителĕклĕ-и, вĕсем валли тухăçлăн ĕçлеме условисем туса панă-и, транспорт вăйĕсене тĕрĕс вырнаçтарнă-и, — çак ыйтусем тĕп вырăнта пулмалла халĕ партипе совет организацийĕсен кулленхи ĕçĕнче. Начар ĕçленине витме тĕрлĕ сăлтавсем шыраса ларни мар, хастарлăн та тимлĕн ĕçлени кирлĕ.

Республикăри хуласемпе поселоксенчи чылай предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем хăйсене валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Шупашкар хулинчи маляри станцийĕн коллективĕ 200 кубометр вырăнне 259 кубометр вутă хатĕрленĕ. Хулари больница, ачасен 10-мĕш тата 2-мĕш номерлĕ яслисен тата ытти предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем вутă хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарнă. Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хуласенче те вутă хатĕрлемелли плана тултарнă предприятисемпе учрежденисем пур.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, вутă хатĕрлесси питех те çителĕксĕр пулса пырать-ха. Акă Шупашкар хулине илер. Хулари предприятисемпе учрежденисем валли пурĕ 132 пин кубометр ытла вутă хатĕрлемелле пулсан, августăн 20-мĕшĕ тĕлне 29 пин кубометр ытларах çеç хатĕрленĕ. Вутă хатĕрлес тĕлĕшпе колхозник çурчĕн, Заготзерно конторин, Древпромсоюз, Чăвашторг тата ытти чылай учрежденисен коллективĕсем питех те начар ĕçлеççĕ. Тĕрĕссипе каласан, вĕсем вутă хатĕрлеме тивĕçлипе тытăнман та. Çапла, уйрăм руководительсен тимсĕрлĕхне пула, хула валли вутă хатĕрлес ĕç хăрушлăх умĕнче юлать.

Канаш, Çĕмĕрле хулисенче тата Советски, Ишлей районĕсенче те ĕçсем çителĕксĕр пыраççĕ. Советски районра предприятисемпе учрежденисен 7.000 кубометр ытла вутă хатĕрлемелле. Вĕсем пурĕ те 2.000 кубометра яхăн çеç хатĕрленĕ. Вăл ĕçре уйрăмăнах суту-илÿ, сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисем тата вырăнти промышленность предприятийĕсем кая юлса пыраççĕ. Çав учрежденисен руководителĕсем иртнĕ çулта вутă пулман пирки ĕçлемесĕр ларнине манса кайнă пулас.

Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли пысăк ĕçсенчен тепри вăл — предприятисемпе электростанцисене, коммуналлă хуçалăха, пурăнмалли çуртйĕрсене юсаса ăшăтасси пулать. Çурт çийĕсем питĕ пулччăр, водопровод лайăх ĕçлетĕр, чÿречесемпе алăксем юсавлă пулччăр. Партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем çав ĕçсене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн тытăннă çĕрте ĕççыннисем те вĕсене активлăн пулăшаççĕ, унта вара ремонт ĕçĕсем те ăнăçлăн пыраççĕ. Пĕр уйăх ытла каярах Трак разъезчĕн коллективĕ, чугун çул работникĕсен кунне хатĕрленнĕ май, хĕле тĕплĕн хатĕрленме сăмах пачĕ. Вăл хăйĕн сăмахне тивĕçлипе пурнăçа кĕртнĕ. Унта служба çурчĕсене, стрелкăсене кĕске срокрах тата пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ. Кун пек примерсем татах та илсе кăтартма пулать.

Çав вăхăтрах чылай предприятисемпе учрежденисенче çуртйĕрсене юсасси начар пырать-ха. Мĕншĕн тесен предприяти руководителĕсемпе партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем вăл ĕç çине пачах та çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра хĕле хатĕрленесси çинчен тахçанах калаçма пуçланă. Унта рабочисен общежитисене тĕрĕслеме комиссисем те тунă. Анчах ĕçсем çаплипех юлаççĕ-ха. Общежитисем валли вутă турттарма тытăнман, кăмакасене, çурт çийĕсене юсасси, çуртсене ăшăтасси начар пырать. Апла пулин те, завод руководителĕсем çав ĕçсене хăвăртлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ.

Хуласемпе предприятисене тата учрежденисене хĕле хатĕрлес ыйту халĕ ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен, райсоветсемпе хула совет исполкомĕсен тата комсомолпа профсоюз ĕçĕн кун йĕркинче пулмалла. Пуçарулăх кăтартни, ĕççыннисене ĕçе ытларах явăçтарни кирлĕ. Вырăнти транспортпа туллин усă курмалла. Хĕллехи вăхăтра вутă çителĕксĕр пирки начар ĕçлет-пĕр тесе калас йăлана яланлăхах пĕтермелле. Вутă çителĕклĕ хатĕрлессишĕн, предприятисемпе учрежденисен çурчĕсене, коммуналлă хуçалăха хĕле тĕплĕн хатĕрлессишĕн вĕсен руководителĕсем, партипе профсоюз организацийĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсем ĕнтĕ хĕллехи вăхăтра тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ мĕнпур условисене хатĕрлеме тивĕçлĕ.

Хĕле хатĕрленес ыйту перекетлĕх режимне çирĕппĕн пăхăнса ĕçленипе таччăн çыхăнса тăрать. Хуçасăрлăх, ответсăрлăх пур çĕрте вутă тата чĕртаварсен запасĕсене хатĕрлеме те йывăр. Çавăнпа та кашни заводра, фабрикăра, учрежденире большевикла çирĕп йĕрке пулмалла.

Партипе совет организацийĕсен тата предприятипе учрежденисен руководителĕсен паянхи хисеплĕ тивĕçĕ вăл — хĕле хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе хĕле пур енĕпе те октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрленсе çитмелле тăвасси пулать. Комсомолпа профсоюз организацийĕсем çинче пысăк ответлăх тăрать. Вĕсен çамрăксемпе профсоюз членĕсене юсав ĕçĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме çĕклемелле.

Совет тылĕ — фронтăн шанчăклă тĕрекĕ. Фронт валли çĕнтерÿ хĕçпăшалне туптакан совет тылне хĕллехи вăхăтра лайăх ĕçлеме пур енчен те тĕплĕн хатĕрлер!

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн главнокомандующине Иосип Броз-Тито маршала 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăласси çинчен

Çаресене ертсе пырас ĕçре тата Совет Союзĕпе Югославин пĕрлехи тăшманне — гитлерла Германие хирĕç çапăçас ĕçре калама çук пысăк çитĕнÿсем тунăшăн Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн главнокомандующине Иосип Броз-Тито маршала 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Эдуард Карделе наградăласси çинчен

Совет Союзĕпе Югославин пĕрлехи тăшманне — гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçре çав тери чаплă ĕçленĕшĕн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Югослави халăхĕн ирĕклĕх комитет председателĕн пĕрремĕш заместительне Эдуард Карделе Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕ.

Фронтовиксен ачисем валли санатори

ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн бюровĕ фронтовиксен ачисен сывлăхне сыхлас ыйтăва сÿтсе-явнă. Ильинкăра 100 ача валли санатори уçма йышăннă.

Районри колхозсем, райком решенине туллин кăмăлпа ырласа, ачасен санаторийĕ валли продуктсем уйăраççĕ. Пурĕ 16 гектар тулă, 30 гектар урпа тата 10 гектар çĕрулми санатори валли уйăрса панă.

П. ИСАЕВ.

Мускава Финлянди правительствин делегацийĕ килнĕ

Совет Союзĕпе мир тăвасси çинчен калаçма Мускава Финлянди правительствин делегацийĕ килнĕ. Делегацире çак çынсем тăраççĕ: министрсен совечĕн председателĕ А. Хакцель господин (вăл — делегаци председателĕ); оборона министрĕ инфантери генералĕ Р. Вальден; генеральнăй штаб начальникĕ А. Хейнрикс генерал-лейтенант; О. Энкель генерал-лейтенант.

Делегаципе пĕрле çак экспертсем килнĕ: П. Хюннинен, В. Гренблюм, Э. Кастрен господинсем тата секретарьсем.

Мускав аэродромĕнче делегацие çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов тата СССР Наркоминделĕн ытти представителĕсем, СССР Оборона Халăх Комиссариатĕнчен — Тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ В. М. Евстигнеев генерал-майор.

Сентябрь 5 | Сентябрь 15

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

КĂНТĂРЛА ТА, ÇĔРЛЕ ТЕ ХĔРÛЛЛĔ ĔÇ ВĔРЕТ

ЕТЕРНЕ, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красный Октябрь» колхоза эпир тĕттĕм пулсан çитрĕмĕр. Анчах та колхоз итемĕнче çаплах ĕç вĕресе тăрать. Унта пĕр чарăнмасăр машинăпа авăн çапаççĕ.

— Пирĕн колхозниксем фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн малтанхи кунĕсенченех кăнтăрла та, çĕрле те ĕçлеме тытăнчĕç, — тет колхоз председателĕ Охандерова юлташ. — Колхозниксен кăçал ĕçлес кăмăлĕ те пысăк. Фронтран савăнăçлă хыпарсем килсе тăраççĕ, колхозăн тырри те ăнса пулчĕ. Иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах тырпул пухса кĕртетпĕр Колхозра ваттисемпе çамрăккисем те нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Акă, М. Дроздов, Г. Мефодьева, Л. Мурзина нормăна нихăçан та 150 процентран кая тултармаççĕ. Вĕсем ик-виçĕ кун ĕнтĕ колхоз итемĕнчен тавăрăнмасăр ĕçлеççĕ. Уйăх анса ларсан çывăрма выртаççĕ те шурăмпуç хăпарсан татах ĕçлеме тытăнаççĕ. Молотилкăпа авăн çапакан И. Иванов кулленхи нормăна 200 процент тултарать.

— Кăçал манăн Хĕрлĕ Çар ретне каймалла, стахановец пулса кайма шутлатăп, ман ĕмĕт танкист пуласси,—тет Иванов юлташ.

Колхозра Тетерина юлташăн бригади малта пырать.

— Халĕ тата лайăхрах ĕçлес килет. Пирĕн колхозниксем çĕнтерÿ çывăххине туяççĕ, тырпулсене хăвăртрах çапса пĕтерсе, Хĕрлĕ Çара ытларах тырă туса парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ,—тет Тетерина юлташ.

Колхоз тырă вырса пĕтернĕ, паян-ыран кĕлте турттарса капана хывса çитереççĕ. Мурзин юлташ ертсе пыракан бригада ыран государствăна тырă парса татать.

Колхоз çĕрулми кăларма тытăннă. Государствăна çĕрулми районра чи малтан парса, колхоз пĕррремĕш квитанци илнĕ. Çĕрулми обязательствине паянхи кун тĕлне 75 процент тултарнă.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра кĕлте кÿрсе капана хывса кăна мар, авăн çапса та пĕтеретпĕр тата государствăна пур тĕрлĕ культурăсемпе те тырă парса тататпăр.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

12 çулхи ача 100 ĕçкунĕ тунă

Сталин ячĕпе тăракан колхозри (Куславкка районĕ) Егоров Иван 12 çулта çеç пулин те уйра тĕрлĕ ĕçре ĕçлесе 100 ĕçкунĕ тунă. Ваня кăçал хăй çеç пĕр вăкăра ĕçе вĕрентрĕ, халĕ çав вăкăрпа ĕçлет. Ваня ирех ĕçе тухать. Вăл ĕçлемен ĕç те çук. Кăнтăрла уй ĕçĕнче, каçхине вăкăрне пăхать. Ваня иртнĕ çулта 84 ĕçкунĕ тунă. Унăн ашшĕ фронтра нимĕçсене хамăр тăван çĕршывран хăвалать.

Ваньăна правлени преми пама пулнă, ку вара ăна татах хавхалантарать, вăл савăнсах ĕçлет, ĕç нормине ытлашшипех тултарать.

Л. РОДИОНОВ.

Колхоза активлăн пулăшаççĕ

ШАХАСАН. Атнашри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекен ачасем каникул вăхăтĕнче Киров ячĕпе тăракан колхоза пур ĕçре те пулăшса тăраççĕ. Вĕренÿре лайăх ĕлкĕрсе пыракан ачасем ĕçре те малта. Акă иртнĕ вĕренÿ çулĕнче Аркадий Михайлов пур предметсемпе те пятерка илнĕ. Каникул пуçланнăранпа вăл 103 ĕçкунĕ тунă. 8 кун хушшинче 1,10 гектар ыраш вырса 19,75 ĕçкунĕ тунă. Çавăн пекех 4-мĕш класра вĕренекен Лидия Васильева 101 ĕçкунĕ, Раиса Сергеева 59 ĕçкунĕ, Павел Иванов 58 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. 3-мĕш класра вĕренекен Рима Розанова (10 çулта), каникулра ырмиканми ĕçлесе, 26 ĕçкунĕ тунă. Ытти шкул ачисем те тырпула пухса кĕрес ĕçре ĕç нормине 150—200 процентран кая мар тултарса пыраççĕ.

А. АНТОНОВ.

Çитес çулшăн тырă параççĕ

МУРКАШ, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Вунăкунлăха хутшăннă хыççăн районри колхозсенче тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсем чылаях хĕрÿленчĕç.

Лайăх çанталăкпа усă курса, район государствăна тырă памалли графика кунран-кун иртттерсе тултарма пуçларĕ. График тăрăх кунсерен 90 тонна тырă леçмелле пулсан, сентябрĕн 6-мĕшĕнче 102 тонна, сентябрĕн 7-мĕшĕнче 136 тонна леçнĕ. Чылай колхозсем тырра графикпа кăтартнинчен ытларах леçсе тăраççĕ.

Государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе уйрăмах Йÿçкасси ялсоветĕнчи «Броневик», Атапайри Свердлов ячĕпе тăракан, Орининăри «Красное Сормово» колхозсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсене кăçалхи çулшăн парса татнă та çитес çулшăн тырă леçме тытăнчĕç. «Красное Сормово» колхоз 1945 çулшăн аванс шучĕпе 117 центнер тырă леçнĕ те ĕнтĕ.

1944 çулхи обязательство тăрăх çавăн пекех «Красная Чувашия» (Оринино ялсовечĕ), «Автогигант», «Крестьянин», Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те тырă парса татнă. «Красная Чувашия» колхоз государствăна 18 центнер çĕрулми леçнĕ.

Анчах та районра малта пыракан колхозсен хÿттинче пытанса тăракансем те пур-ха. Графика район тултарса пырать пулин те, Шетмĕ ялсоветĕнчи колхозсем ăна пăсса ĕçлеççĕ. «Звезда» колхоз (председателĕ Николаев) сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне графикпа пăхнинчен 200 центнер, «Восток» колхоз (председателĕ Васильев) 115 центнер сахалтарах тырă леçнĕ.

Матьăк ялсоветĕнчи «Ударник», «Труд» тата Красин ячĕпе тăракан колхозсем те çак ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Т. ИВАНОВ.

МТС çулталăкри плана 96 процент тултарнă

Чкаловски МТС-ри 9 бригада тракторсемпе ĕçлемелли плана ытлашшипех тултарчĕç. Уйрăммăн илсен, И. Ситов юлташăн бригади плана 128 процент, В. Пыркин юлташăн бригади 122 процент, хĕрарăмсен Константинова юлташ ертсе пыракан 7-мĕш бригади 119 процент пурнăçланă. Трактористка К. Шашкина СТЗ—9 тракторпа 330 гектар вырăнне — 670 гектар, 9-мĕш бригадăри Н. Илюткина юлташ 632 гектар сухаларĕç.

Çапла вара пирĕн МТС паянхи кун тĕлне тракторсемпе çулталăкра тумалли ĕçсен планне 96 процент тултарчĕ. Плана пирĕн МТС тахçанах иртттерсе тултарма пултаратчĕ, анчах горючи çителĕклĕ пулманни чăрмантарчĕ. Çураки пуçланиччченех пирĕн района 150 тонна горючи панăччĕ, çак шутран колхозсем пурĕ те 70 тонна кăна кÿрсе килчĕç. Район руководителĕсем колхозсене вăхăтра горючи турттарас тĕлĕшпе хистемерĕç. Çĕртме тунă чухне вара горючисĕр лартăмăр.

Уйрăмăнах автотракторосбытăн çаврăнăçусăр та пуçарусăр руководителĕ Марков юлташ пирки каламалла. Пирĕн тракторсем валли тĕрлĕ пайсем чылай кирлĕ пулчĕç. Эпир ăна вара тракторосбыт кантурĕсĕр, Мускав урлă илтĕмĕр. Автотракторосбыт çуркунне те, халĕ те пире нимĕн те пулăшмарĕ.

Халĕ пирĕн МТС тракторĕсем колхозсенче ыраш акаççĕ. Çак кунсенчех кĕрхи çĕртме тума тытăнатпăр. План тăрăх пирĕн 2600 гектар кĕрхи çĕртме тумалла, паянхи кун тĕлне вара пурĕ те 96 гектар кăна тунă. Горючи халĕ çителĕклĕ пачĕç. Кĕрхи çĕртме тумалли плана ытлашшипех тултарма пултаратпăр.

Ф. АРХИПОВ,
МТС директорĕ.

Вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха хутшăнса, районри колхозсем кĕлте турттарса капана хывассине вăйлатрĕç. Ку тĕлĕшпе мăйракаллă шултăра выльăхсемпе анлăн усă кураççĕ. Паянхи кун тĕлне 600 ытла вăкăрпа ĕçлеççĕ, вăл шутра колхозниксен 250 ĕнипе усă кураççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра колхозниксем хăйсен 28 ĕнипе тата колхозри 24 ĕнепе кĕлте турттараççĕ. 67 гектар çинчи тырра ĕнесемпе турттарса капана хывнă. «Трактор» колхозра колхозниксем хăйсен 15 ĕнипе тата колхозăн 7 вăкăрĕпе ĕçлеççĕ, кунта 200 гектар çинчи кĕлтесене турттарса капана хывнă. «Красный воин» колхозра 23 ĕнепе турттараççĕ.

Районра государство валли тырă йышăнма вырăнтах уйрăм пунктсем уçнă. Çав пунктсене юлашки кунсенче кăна 350—370 центнер тырă ĕнесемпе турттарса пынă. «Новая жизнь» колхоз та 8 вăкăрпа 20 центнер тырă турттарса пынă. Уйрăм хуçалăхпа пурăнакан В. Семенов хăй ĕнипе «Новая жизнь» колхозра тара кĕрешсе кĕлте кÿрет. Вăл пурĕ 130 лав кĕлте турттарнă.

«Двигатель революции» колхоз государствăна 291 центнер тырă леçсе парса, графика ытлашшипех тултарнă. Кунта тырă турттарнă çĕрте 24 ĕнепе усă кураççĕ. Ку ĕçре колхоз председателĕ Петухов тата партин пуçламĕш организаци секретарĕ Кондратьев юлташсем хăйсем тимлĕн тăрăшаççĕ.

Н. КОНДАКОВ.

Малта пыракан бригада

Калинино районĕнчи Çĕньял Явăшри «Синьял» колхозра тырă вырса пĕтерчĕç. Колхозниксем халь хĕрсе авăн çапма тытăнчĕç. Авăн çапса государствăна срокчен тырă парса татма тăрăшаççĕ. Пăрса йышши тырăсене те пухса пĕтереççĕ.

Çак ĕçсенче пуринчен ытларах 4-мĕш бригада тимлĕн ĕçлерĕ. Ку бригада тырпулсене ытти бригадăсенчен маларах пуçтарса кĕртрĕ. Бригадăри колхозниксем, тăрăшса ĕçлесе, нормăна тултарса пыраççĕ. Тырă выракансем А. Аркадьевăпа М. Прокопьева кашни кунах нормăна иртттерсе тултараççĕ. Вĕсем кашни кун алăпа 0,23—0,25-шер гектар вырса пычĕç. 75 çула çитнĕ старик Н. Иванов пĕр ĕçрен те юлмасть. Вăл тырă акнă çĕрте нормăна 100—150 процент тултарса пычĕ. Вăл пĕтĕмпе 115 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă.

Ку бригадăра массăллă ăнлантару ĕçĕ те лайăх пулса пырать. Агитатор И. Иванов кашни кунах фронтран килекен çĕнĕ хыпарсене тата Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене колхозниксене вуласа ăнлантарса парать.

Бригада мала тухни бригадир Пенькова ĕçе тĕрĕс йĕркеленинчен килет. Вăл колхозниксене ĕçре хавхалантарса, кашни ĕçе уйрăм сдельщинăпа ĕçлеттерет.

Бригада кĕрхи тырăсене 100 процентчĕпех акса пĕтерчĕ. Государствăна тырă леçессипе те ку бригада малти вырăнта.

Н. ВЛАДИМИРОВ.

Болгари ĕçĕсем

Сентябрĕн 5-мĕшĕнче Совет Союзĕ Болгарипе çыхăну тытма пăрахрĕ те ССР Союзĕпе Болгари хушшинче вăрçăллă лару-тăру пулни çинчен пĕлтерчĕ. Совет Правительстви çак решение çакăн пирки йышăннă: Германин вăрçăри лару-тăрувĕ начарланни Болгарие Германипе çыхăнса тăрассине татма тата, çапла вара, хăйĕн Германи майлă политикине пĕтерсе лартма лайăх майсем туса панă пулин те, Болгари Германипе çыхăнса тăма пăрахмарĕ, нимĕçсене Болгари территоринче пытарса усрарĕ тата союзниксен вăйĕсене хирĕç тăмашкăн Болгарире çĕнĕ плацдарм тума нимĕçсене май парса пычĕ.

Совет нотине пичетлесе кăларнă хыççăн Болгари Правительствин представителĕсем — Болгарин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральнăй секретарĕ Сарафов господин тата çав министерствăн политика департаменчĕн директорĕ Алтынов господин сентябрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Советăн Софири ĕçсен поверенннăйĕ Д. Г. Яковлев патне пынă та Болгари Правительстви ячĕпе Совет Правительствине çакăн çинчен пĕлтерме ыйтнă: Болгари Германипе çыхăнса тăма пăрахрĕ тата Болгари Правительстви Совет Правительствинчен перемири тума ыйтать, тенĕ.

Çакăн пек официально пĕлтернисене пăхмасăр, Болгари Правительстви сентябрĕн 6-мĕшĕнче: эпир Совет Правительствинчен перемири тума ыйтрăмăр, тесе çеç пĕлтернĕ, анчах Германипе çыхăнса тăма пăрахни çинчен нимĕн те каламан. Çапла вара, Болгари Правительстви Советăн Софири ĕçсен поверенннăйне пĕлтернипе Болгари Правительстви пĕтĕм халăха пĕлтерни хушшинче хирĕçÿлĕх пурри палăрчĕ. Çакăн пек хирĕçÿлĕх пулнине кура Совет Правительстви Болгари Правительствин позицийĕ пирки иккĕленмесĕр тăма пултарайман. Çавăнпа та Совет Правительстви Болгари Правительстви перемири тума ыйтнине пăхса тухас ĕçе тытăнма пултарайман.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче кăна Болгари Правительстви хăй Германипе çыхăнса тăма пăрахни çинчен пĕлтерчĕ.

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче Болгари Правительстви хăй Германие хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтерчĕ.

Хальхи вăхăтра Совет Правительстви Болгари Правительстви перемири тăвасси çинчен калаçас пирки ыйтнине пăхса тухмашкăн йышăнма май пур тесе шутларĕ.

СССР НАРКОМИНДЕЛĔН ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

ВЦСПС-ра

ВЦСПС-па СССР Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ суту-илÿ организацийĕсемпе предприятийĕсен çырла-çимĕçсемпе ытти тĕрлĕ продуктсем хатĕрлес тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура, августăн 1-мĕшĕчченхи итогсем тăрăх, Чăваш плодоовощтрест (управляющийĕ Белянкин юлташ) мала тухнине палăртса, ăна пĕрремĕш преми — 15.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Плодоовощтрестăн Шупашкарти контори (управляющийĕ Гаврилов юлташ), районсенчи хатĕрлев конторисен ăмăртăвĕнче мала тухса, виççĕмĕш преми — 5.000 тенкĕ укçа илме тивĕçлĕ пулчĕ.

* * *

ВЦСПС-па Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ пахча-çимĕçсем хатĕрлемелли плана лайăх тултарнăшăн Канаш районĕнчи хатĕрлев конторине (управляющийĕ Кулагин юлташ) пĕрремĕш преми 13.000 тенкĕ, Шупашкарти конторăна (управляющийĕ Гаврилов юлташ) виççĕмĕш преми—8.000 тенкĕ памалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЛОМЖА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, тăшманпа çапăçса, темиçе ял туртса илнĕ, вăл шутра ТАРНОВО, ВЛОСЬЦЯНСКИ, РОЗВОРЫ, ПЖИТУЛЫ, ОЛДАКИ, ВОЙЦЕХОВИЦЕ ятлă пысăк ялсем.

Румынире пирĕн çарсем малалла куçса пынă, РЫМНИКУ ВЫЛЧА, ДРЭГЭШАНИ, КОРАБИЯ, ТÿРНУ-МЭГУРЕЛЕ хулисене туртса илнĕ. УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем сентябрĕн 6-мĕшĕнче 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Халĕ паллă пулнă тăрăх, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем сентябрĕн 3-мĕшĕнче БАКЭУ хули районĕнче тыткăна илнисем шутĕнче тата çаксем пулнă: нимĕçсен 6-мĕш арми командующийĕн тыл тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ БУРКХАРД генерал-лейтенант, 376-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ШВАРЦ генерал-лейтенант, КИШИНЕВ хулин комендантĕ пулнă ДЕВИТЦ генерал-майор.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 30 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 17 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Ломжа хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, темиçе ял туртса илнĕ. Тăшман юлашки кунсенче пысăк çухатусем тÿснĕ, халĕ вăл çĕнĕ чаçсем куçарса пырать, хытă хирĕç тăрса çапăçать. Пĕр участокра нимĕçсен танкĕсемпе пехоти 12 хутчен контратака тунă, анчах та нимĕнле çитĕнÿ те тăвайман. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли таран выртса юлнă, унăн 16 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 14 тупă, 30 пулемет тата боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Тепĕр районра пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пунктне туртса илнĕ. Нимĕçсем хăйсем çухатнă позицие каялла туртса илме хăтланнă, анчах та пирĕннисем вĕсене пур тĕслĕ хĕçпăшалпа та пеме тытăннă, вара гитлеровецсен ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ.

* * *

Румынире пирĕн çарсем çаплах малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Олтул шывĕ урлă каçнă та Дрэгэшани хулине туртса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем кун каçиччен 40 километр малалла кайнă, Дунай шывĕн çурçĕр хĕрринчи Корабия хулине туртса илнĕ. Тăшман васкасах резервсем куçарса пырать те вĕсене çул çинченех çапăçăва кĕртсе ярать. Советсен çăмăллăн куçса çÿрекен соединенийĕсемпе пехоти, çав тери хăвăрт пыра-пыра çапса, тăшман чаçĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ, трофейсем нумай тытса илнĕ тата тыткăна нумай илнĕ. Пĕр участокра пирĕн танкистсем нимĕçсен Вена хулинчен халь çеç пырса çитнĕ маршевăй батальонне аркатса тăкнă.

* * *

Тарту хулинчен çурçĕртерехре пирĕн разведка çакна пĕлнĕ: тăшман, атака тума хатĕрленсе, хăйĕн пехотине нумай пухса тăратнă тата 50 танка çити илсе пынă. Ирхине ирех пирĕн авиаци гитлеровецсем пухăнса тăнă вырăна йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Нимĕçсен истребителĕсем хăйсен çарĕсене хÿтĕлеме тата вĕсене аркатса тăкасран çăлса хăварма çÿле вĕçсе хăпарнă. Совет истребителĕсем тăшман авиацийĕн ĕçĕсене пÿлсе лартнă та хамăр бомбардировщиксемпе штурмовиксене тăшмана вăйлăн тапăнма май туса панă. Вара пирĕн авиаци нимĕçсен 10 танкне, 2 бронетранспортерне, 40 туппине çити тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 60 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 2 боеприпас складне сирпĕнтерсе янă. Çавăн пекех тата тăшман пехоти те пысăк çухатусем тÿснĕ. Çапла вара нимĕçсем хатĕрленĕ атака пăчланса ларнă. Сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 4 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман хăйĕн чаçĕсене улăштарнă. Пирĕн разведка отрячĕсем нимĕçсене шăп çав вăхăтра атакăланă. Çакна кĕтмен гитлеровецсем хирĕç тăма пултарайман, вара вĕсем, çав лайăх позицие хăварса, ирĕксĕрех каялла чакнă. Совет разведчикĕсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Çурçĕр флочĕн карапĕсем нимĕçсен подводнăй лодкине шыва путарнă.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен 62-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне Луи Тронье генерал-майора тыткăна илнĕ. Çак генерал çапла каласа панă: «Нимĕçсен аслă командованийĕ пире темиçе хутчен те çапла каласа панăччĕ: Хĕвелтухăç фрончĕн кăнтăрти участокĕнче вырăссем вăйлă наступлени тăвас çук, мĕншĕн тесен совет çарĕсен пур вăйĕсем те фронтăн вăтаçĕрти тата çурçĕрти участокĕсенче çапăçаççĕ, тенĕччĕ. Августăн 20-мĕшĕнче вырăссем сасартăк кăнтăрта та наступлени пуçласа ячĕç. Манăн çакна ирĕксĕрех йышăнса калас пулать: Совет çарĕсем татнă оборонăна румынсем мар, нимĕç çарĕсем хÿтĕлесе тăнă. Лару-тăру хăрушланса çитсен, мана 62-мĕш дивизие хăвăрт каялла илсе тухма приказ пачĕç. Анчах та вырăссем пирĕнтен нумай хăвăртрах маневр туса иртттерчĕç. Вĕсем ман дивизие çавăрса илчĕç. Эпĕ тăрса юлнă çынсемпе хĕвеланăçнелле, Прут шывĕ çине тарса тухма шут тытрăм. Питех те пысăк çухатусем тÿсмелле пулчĕ. Эпир чакнă çул çинче темиçе пин нимĕç салтакĕ вилсе юлчĕ. Тăваттăмĕш кун манпа пĕрле офицерсен пĕчĕк ушкăнĕ кăна тăрса юлчĕ. Вырăс кавалерисчĕсене курсан, эпир вара алăри хĕçпăшала пăрахрăмăр та тыткăна парăнтăмăр».

Герой Мидхат Салихов

Пайтах мухтавлă та паттăр ывăл-хĕрсем пирĕн тăван çĕршывăн. Çичĕ ютран килсе тапăннă хура тăшмансене хирĕç арăслан пек çапăçса, вĕсем ирĕклĕ халăхăн чаппине çутă хĕвел пек çĕклентереççĕ, ăслă пурнăçшăн çапăçса хăйсен ячĕсене ĕмĕр манми юлаççĕ.

Мидхат Салихов — çирĕммĕш çул тултарнă [illegible]. Вăл Чăваш республикинче, Кармăш хулинче çуралса ÿснĕ. Вăрçăччен вăл авиатор пулма ĕмĕтленнĕ. Анчах юлхав фашистсем пирĕн çĕре килсе тапăнсан, унăн хăйĕн профессине улăштармалла пулнă. Вăл артиллерист пулса тăнă.

«Артиллери — вăрçă турри», — теççĕ çав çынсемшĕн. Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне пĕрре çеç мар кăтартса панă Мидхат Салихов çапăçу хирĕнче.

* * *

Кĕркунне тул курăкĕ витĕннĕ çĕрсемпе. [illegible] Сталинград çĕрсенчех [illegible] окопсене [illegible] танксем [illegible]. Кунтан пирĕн танксем, тăшмана хăваласа, малалла кайнă. Окопсене, лапамра нимĕç салтакĕсен виллисем аллисене саркаласа выртаççĕ. Вĕсем ирхине, пирĕн артиллеристсем тăшман пуçĕ çине вут-çулăм сапма тытăннă чухне, хаяррăн çапăçма хатĕрленнĕ пуласс. Анчах вĕсем совет артиллерин çĕре чĕтретсе тăракан хăватлă сассине нумай итлеме ĕлкĕреймен. Халĕ ĕнтĕ пехотăпа пĕрле малалла тапăнса пыракан Мидхат Салиховăн артиллерисчĕсем хăйсен ĕçĕпе савăнма пултараççĕ.

Головище ялне ирĕке кăларнă хыççăн Мидхат Салихов разведчиксенчен тăшман пирĕн чаçсем çине наступлени пуçарни çинчен хыпар илнĕ. Артиллеристсен çавăнтах оборона йышăнма тивнĕ. Мидхат Салихов хăйĕн туппине вырнаçтарса тухнă та наблюдательнăй пункта кайнă. Кăç пулас умĕн вăл сылтăм енчен нимĕç салтакĕсем кĕпĕрленсе килнине курнă. Ун çинчен вăл çавăнтах пехота командирĕсене пĕлтернĕ, орудисене тăшман çинелле çавăрма хушнă. Çав самантра пĕр çĕр метр хыçалта ларакан çурта вут хыпса илнĕ, сыхăну ĕçлеме пăрахнă.

Салихов хамăр чаçсемпе çыхăнас тесе пĕр телефониста янă. Вăхăт чылай иртнĕ, анчах вăл таврăнман. Унтан татах тепĕр çын янă, вăл та таврăнайман. Тăшман артиллеристсене çавăрса илнĕ иккен. Кун хыççăн вара Мидхат Салихов тăшмана хирĕç хăйĕн вăйĕпех çапăçма шут тытнă. Çĕпĕрте ÿссе çитĕннĕ хастар йĕкĕте — старши сержант Сибейкина нимĕçсенчен туртса илнĕ пулеметпа орудисенчен инçех мар оборона йышăнма хушнă та тепĕр боеца хăйсем хăçан атака пуçласси çинчен пехота командирĕсене пĕлтерме янă.

Шуçăм килнĕ чухне çеçенхир тăрăх хăватлăн урра кăшкăрни янраса кайнă. Çав самантрах пулемет сасси шатăртатма пуçланă. Вăл Мидхат Салиховăн артиллерисчĕсем атакăна тухни çинчен пĕлтерекен сигнал пулнă. Çав сигналпа пехота та çапăçăва çĕкленнĕ. Хаяр çапăçу пуçланнă. Пирĕн артиллеристсем штыкпа, гранатăпа хăйсем валли çул уçнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен вуншар салтакĕсен виллисем сапаланса юлнă. Мидхат Салиховăн подразделенийĕ хамăрăн чаçсемпе пĕрлешнĕ.

Çапах та канма вăхăт пулман. Тăшман хăйĕн вăйĕсене йĕркеленĕ хыççăн татах атака пуçарса янă. Ку хутра вара тăшман «психически» текен атака тума пикеннĕ. Ĕçсе супнă нимĕçсем, кăшкăрса, çуйăхса, ретĕн-ретĕн утса пынă.

— Снарядсене перекетлĕр, — хушнă Мидхат Салихов,—çывăхран кăна перĕр.

Ку сăмахсем мĕне пĕлтернине артиллеристсем лайăх ăнланаççĕ. Вĕсен [illegible] çеç юлнă. Çавăнпа кашни снарядпа кирлĕ пек усă курмалла. Тăшмана тĕллĕ пемелле.

Тăшман пĕр 100—150 метра çывхарсан, орудисем пĕр харăс пеме тытăннă. [illegible] тепри çĕр çине пере-пере аннă. Апла пулин те чĕррисем малаллах утнă. Вĕсен речĕсем сайралнă çемĕн сайралса пынă. Юлашкинчен вара вĕсем, артиллеристсен паттăрлăхĕпе хăюлăхне тÿсеймесĕр, ним йĕркесĕр каялла тарма пуçланă. Мидхат Салихов артиллерисчĕсем тăшмана йĕрлесе малалла ыткăннă.

Командовани артиллеристсене çак чаплă çапăçушăн орденсемпе медальсем парса наградăланă. Пирĕн землякăн Мидхат Салиховăн кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ ялкăшма пуçланă.

* * *

Пирĕн чаçсем тăшмана сывлăш çавăрма памасăр хĕвеланăçнелле хăваласа пыраççĕ. Çухрăм хыççăн çухрăм тасалса пырать фашизм пусмăрĕнчен Украина çĕршывĕ. Анчах та гитлеровецсем пĕр пусăм çĕре те хăйсен ирĕкĕпе пăрахса хăварасшăн мар. Вĕсем, аманнă тискер кайăксем пек, харкашса туллашаççĕ.

Тул çутăлса килнĕ чух фашистсем вунă танкпа тата пĕр батальон пехотăпа Бузовка ялĕ енчен пирĕн çине контратака пуçласа яраççĕ. Салихов батарейи вĕсене куç уçма памасăр мĕнпур тупăсенчен ăшалантарнипе кĕтсе илет. Пит те тĕл пырса тивеççĕ иккен совет снарячĕсем. Гитлеровецсем, çирĕме яхăн автоматчик вилли пăрахса хăварса, каялла тапаççĕ. Анчах хăйсем пурĕ-пĕр лăпланмаççĕ-ха: тепĕр икĕ сехетренех вĕсем тата тепĕр контратака тумашкăн хатĕрленме пуçлаççĕ. «Аха, çаплах кĕçĕтет иккен-ха ку ирсĕрсен, — шутлать Салихов. — Апла пулсан, эпир вĕсене авантарах хыçса ярăпăр». Вăл хăйĕн батарейине лайăххăн хатĕрленсе тăма хушать те, хăй наблюдательнăй пункта кайса, тăшман мĕн хăтланнине сăнама тытăнать.

Гитлеровецсем хăйсен вăйĕсене пĕр айлăмлăрах вырăна пухса пĕтĕçтереççĕ. Паллах, вĕсем кунтан пирĕн чаçсем çине сиксе ÿксе, малалла саваланса кĕме пикенеççĕ. Салихов васкамасть. «Ытларах пухăнчăр çĕлен-калтасем пĕр çĕре. Çавăнпа лапчăтма ансатрах пулĕ вĕсене», — тет вăл хăйĕн юлташĕсене. Акă фашистсем пуçтарăнса та çитнĕ.

— По фашистским гадам огонь! — команда парать Салихов. [illegible] вут-хĕм ялкăшма пуçлать. [illegible]

[illegible] танкĕсене. Вĕсенчен иккĕшне çавăнтах вут хыпса илет. Ыттисем, ĕç тухманнине кура, каялла тараççĕ.

Çак кун фашистсем пирĕн чаçсене хирĕç тата икĕ хутчен контратака тăваççĕ. Анчах пирĕн мухтавлă земляк Мидхат Салихов батарейи тăшмана хамăр позицисем çине пĕр пусăм та кĕме памасть. Кун каçипе лейтенант Салихов артиллерисчĕсем нимĕçсен виçĕ танкне çунтарса яраççĕ, темиçе çĕр гитлеровеца ĕмĕрлĕхех леш тĕнчене ăсатаççĕ. Тăшманăн мĕнпур атакисене сире-сире янă хыççăн, пирĕн чаçсем, хăйсем наступление куçса, сăхă вăрă-хурахсене хĕвеланăçнелле хуса каяççĕ.

Сахал мар çĕнтерÿллĕ ĕçсем тунă пирĕн мухтавлă тăванăмăр Мидхат Салихов аслă Отечественнăй вăрçă хирĕнче. Вăл командир пулса ертсе пыракан батарея нихăçан та тăшмана парăнман, кирек епле йывăр çапăçуран та яланах чаплă çĕнтерÿпе тухнă. Çавăншăн çар командованийĕ лейтенант Салихова икĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, пĕр хут Отечественнăй вăрçă орденĕпе наградăланă. Правительство ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне парса, ĕмĕрлĕх чапа кăларнă. Унăн кăкри çинче «Ылттăн Çăлтăр» медалĕпе Ленин орденĕ ялкăшать. Салихов юлташ çавах та çак пысăк чыспа мăнаçланмасть, хăйĕн мухтавлăхĕпе паттăрлăхне вăл пĕтĕмпех юлташĕсен мухтавĕ вырăнне хурать.

— Вăрçăри çĕнтерÿсем пĕтĕмпех боецсен паттăрлăхĕнчен килеççĕ. Çавăнпа та командирăн яланах вĕсемпе пĕр кăмăллă, пĕр сисĕмлĕ пулмалла, çапăçури хура-шурра пĕрле тÿссе ирттермелле,—тет вăл хăйĕн боецĕсен паттăрлăхĕ çинчен калана май.

* * *

Юнлă фашистсен юлашки сехечĕ çывхарса килнĕ чух кашни совет çыннин чĕлхи çинче пĕртен-пĕр хаклă сăмах — çĕнтерÿ. Çав çĕнтерÿ хăвăртрах килтĕр тесе, совет воинĕсем хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр çапăçаççĕ. Мидхат Салихов вăрçăра тăватă хутчен аманнă, çапах та хăйне шанса панă хĕçпăшала алăран пăрахман. Сталинград çеçенхирĕсенчен пуçласа Карпат тăвĕсем патне çитиччен хăваласа, çунтарса пынă пирĕн чаплă земляк Мидхат Салихов ылханлă нимĕç вăрă-хурахĕсене. Унăн чаплă ĕçĕсем пирĕн халăха савантараççĕ, çĕнĕрен-çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантараççĕ.

Илья ТУКТАШ,
Максим ТИТОВ.

Çул çитнĕ кашни ача шкула çÿретĕр

Пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентмелли сталинла закона пурнăça кĕртесси— хисеплĕ тивĕç пулса тăрать. Çав закон тăрăх, ялта пурăнакан ачасене 4 çултан кая мар, хуласемпе рабочи поселоксенче пурăнакан ачасене 7 çултан кая мар вĕрентмелле. Правительство йышăннă тăрăх, кăçал шкулсене 7 çула çитнĕ ачасене те илмелле тунă. Çапла вара 1-мĕш классене 7—8 çулхи ачасене илмелле.

Пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентмелли закона ăнăçлăн пурнăça кĕртессишĕн, ача ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрлех, шкул работникĕсем, партипе советăн тата профсоюзăн вырăнти организацийĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Анчах та республикăри хăшпĕр районсенче çав ответлăха тивĕçлипе туймаççĕ-ха. Çакă вăл вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕсенче палăрчĕ. Шăмăршă районĕнче 1-мĕш классенче вĕренме тивĕçлĕ ачасен хисепĕнчен 30 процентĕ, Чкаловски районра 20 процентĕ шкулсене пыман.

Асăннă фактсем районсем пайĕсемпе шкул работникĕсене кăна мар, пĕтĕм общественноçа, уйрăмăнах ялсовет исполкомĕсене хускатма тивĕçлĕ. Мĕншĕн-ха ачасем шкула пыман? Тĕп сăлтав кунта — ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне тивĕçлипе организацилеменнинче тата вырăнти советсем шкулсене тивĕçлипе пулăшу паманнинче.

Шкул работникĕсен тата партипе советăн вырăнсенчи организацийĕсен, вăхăта вăраха ямасăрах, вĕренме тивĕçлĕ пур ачасене те шкула явăçтарма татăклă мерăсем йышăнмалла. Çакна тума ăнлантаруллă ĕçе вăйлатни, ачасем валли вĕренме условисем туса пани кирлĕ. Ку ĕçре шкул работникĕсене комсомол организацийĕсен пысăк пулăшу памалла.

Вăрмар районĕнчи колхозниксем августăн 27-мĕшĕнче воскресник туса ирттерсе шкулсене пулăшма 56 центнер тырă панă. Çакă вăл шкулсенче вĕри апат çитерессине организацилеме май парать. Колхозниксемпе колхозницăсем пулăшнипе вăл районра вĕренме тивĕçлĕ пур ачасене те шкула явăçтарнă. Вăрмарсен опытне пур районсене те сармалла, вĕренекенсене, уйрăмăнах фронтовиксен ачисене, пулăшма лайăх майсем тумалла.

Шкул работникĕсен тата партипе совет организацийĕсен шкулсем валли вутă хатĕрлесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Хальхи вăхăтра çав ĕç питех те сÿрĕккĕн пырать-ха. Чкаловски, Чурачăк районĕсем вутă хатĕрлемелли плана 10 процент та тултарман. Ку ĕнтĕ район руководителĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕ шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление пурнăça кĕртменнине пĕлтерет.

Çамрăк ăрăва çирĕп пĕлÿ тата воспитани парасси — пĕтĕм халăхăн ĕçĕ. Партипе совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсен шкулсене куллен пулăшса пырса ачасене пурне те вĕренĕве явăçтармалла тăвас пулать.

Т. ЕФРЕМОВ.

ПЫЛ ХУРЧĔСЕНЕ ХĔЛ КАÇАРМА ХАТĔРЛЕНЕР

Халĕ, вăрçă пынă вăхăтра, пыл апат çимĕçре те, çавăн пекех тĕрлĕ чир-чĕрсенчен сыватас ĕçре те пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та хурт-хăмăра пăхса усрасси, уйрăмăнах хĕл каçарма хатĕрлесси, — ответлă та пысăк ĕç.

Пыл хурчĕсене ăнăçлăн хĕл каçарас тесен, чăн малтанах вĕсене валли апат çителĕклĕ пулмалла. Хĕлле валли чи лайăх пыл уйăрса хăвармалла.

Юлашки вăхăтра вăрманти тата вăрман çывăхĕнчи хуртсем çăка, юман тата ытти йывăççен çулçисем çинчи пыла (ăна вырăсла «падь» теççĕ) нумай пухрĕç. Çулçă çинчи пыл хурт-хăмăр организмĕшĕн сиенлĕ.

1937 çулта Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхозра çулçă пылĕпе тăрантарнине пула 400 çемье хурт-хăмăр пĕтнĕ. Çулçă çинчи пыла сентябрĕн çак кунĕсенчех вĕллесенчен илсе паха пылпа улăштармалла. Çулçă пылне вĕллерен илес ĕçе тăсма юрамасть, мĕншĕн тесен, хуртсем ăна пичетлеймен пирки, вăл часах йÿçĕхсе каять.

Çулçă пылĕ тĕттĕмрех тĕслĕ, тути те ытла тутлах мар, лайăх хытмасть; çавна пула вара хуртсем часах пичетлесе хуплаймаççĕ. Час-часах çулçă пылне куçпа пăхса уйăрма çук, çавăнпа та ăна тĕрлĕ майпа сăнаса пăхмалла. Сăнасса ăна известь шывĕпе е спиртпа сăнама пулать.

Извĕçпе сăнас ĕçе çапла тумалла. Нумаях мар пыл илсе, пробиркăна е стакана хумалла, çавăн чухлех тасатнă шыв е çумăр шывĕ ярас пулать. Пыла шывра лайăх ирĕлтермелле. Ун çине вара çавăн чухлех известка шывĕ хутăштармалла. Çак стаканри мĕнпур шĕвеке вĕреме тытăниччен ăшăтас пулать. Çулçă пылĕ пулсан, çак хутăштарнă шĕвек çинче хăмăр япаласем пухăнаççĕ, каярахпа вĕсем стакан тĕпне лараççĕ. Хăмăр япаласем мĕн чухлĕ ытларах пухăнаççĕ, çулçă пылĕ унта çавăн чухлĕ нумайрах пулать.

Известкăллă шыва çакăн пек хатĕрлемелле. Сÿнтермен извĕçе илеççĕ те унпа пĕр виçе чухлĕ шывпа хутăштараççĕ, унтан ăна тăрăлтараççĕ. Тăрăлнă шывне урăх савăта пухса илеççĕ те пыла сăнанă çĕрте усă кураççĕ.

96 градуслă эрех спирчĕпе пыла сăнама çăмăлтарах. Ăна тăвас тесен, пĕр пай пыл çине икĕ пай таса çумăр шывĕ хутăштараççĕ те ăна вăйлăн пăтраштараççĕ. Унтан 6—10 пай эрех спиртне хутăштараççĕ. Пыл çинче çулçă пылĕ нумай пулсан, вăл сĕт пек шурă тата пăтранчăк пулать, çулçă пылĕ пулмасан, тăрă та таса пулать.

Çулçă пылĕ пур рамкăсене пĕтĕмпех лайăх пылпа улăштармалла. Вĕллери пыла пĕтĕмпех сăнаса пăхмалла, çавăнпа та кашни рамкăри пыла тĕрĕслемелле.

Хурт-хăмăра хĕл каçма апат панă чухне хуртсем ларакан рамкăсене кăна хăвармалла.

Хурт-хăмăра ĕрчетесси пĕтĕмпех хĕл каçарма лайăх хатĕрленнинчен килет. Çавăнпа та çак ыйту çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Хĕл каçма хуртсене çителĕклĕ таран паха пыл е çăра сироп памалла (1 пай шыв çине 2 пай сахăр ярас пулать). Пылне вара каç енне кайсан памалла. Хурт-хăмăра тăратнă чухне пĕр вĕллери хуртсем тепĕр вĕллери пыла вăрлассинчен сыхланмалла.

Хĕле хатĕрленесси тата хурт-хăмăр лайăх хĕл каçасси пĕтĕмпех хурт-хăмăр ăстаçисенчен килет. Хурт-хăмăра чирлесе пĕтесрен сыхлас тесен, халех вĕллесенчи рамкăсене çулçă пылĕнчен тасатмалла, çулçă пылĕ вырăнне лайăх пыл хумалла.

П. ЗАПОЛЬСКИЙ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн хурт-хăмăр ĕрчетес енĕпе ĕçлекен конторин управляющийĕ.

Хĕле хатĕрленеççĕ

СЕНТЕР. Юнгăри Войков ячĕпе тăракан колхоз хĕрÿ ĕç вăхăтĕнчех 200 центнер вырнаçмалăх овощехранилище, ферма работникĕсем валли çĕнĕ çурт тата тырă типĕтмелли сушилка турĕ. Ку енĕпе ĕçлеме ятарласа строительство бригади организациленĕ. Унта Ф. Бархаткин, Н. Бархаткин, Б. Фролов, А. Патанин, И. Селюшкин юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Халĕ выльăх витисене юсаççĕ.

П. ФРОЛОВ.

Франципе Бельгири тата Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛЕ ВАЙĔСЕН ВЕРХОВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла калант:

Бельгире Гент хулипе Куртре хулине пирĕн çарсем тытса илнĕ. Арментьер хулине тата Лилль хулинчен хĕвеланăçнерехри района Мервиль патне çитиччен тытса илнĕ. Бронетанковăй соединенисем Сент-Омер хулинчен хĕвелтухăçнелле малалла кайнă.

Союзниксен çарĕсем Булонь хули тулашĕнче тăраççĕ. Малти отрядсем Кале хулине çавăрса илнĕ. Верден хулинчен хĕвелтухăçнелле тата çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ.

Авиаци тăшманăн çар объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ СЕДАН ХУЛИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин сотрудникĕ, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çумĕнче тăраканскер, çапла пĕлтернĕ: союзниксен çарĕсем Седан хулине тытса илнĕ, тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла калант: Италире, Адриатика секторĕнче, çав тери вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Флоренци хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем сăртлă вырăнта малалла куçса пыраççĕ. 5-мĕш армин участокĕнче американецсен патрулĕсем Прато хулине кĕрсе кайнă.

Хĕвелтухăç Францире 7-мĕш арми чаçĕсем тата темиçе хула тытса илнĕ, каялла чакакан тăшмана хăвăрт хăваласа пынă. Тăшман вăйлах хирĕç тăман.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, тăшманăн Балканри объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ЭМДЕН ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтернĕ: ĕнер Англин йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Германин тинĕс-çар базине Эмден хулине вăйлăн тапăннă. Тăшман сывлăшра пĕртте хирĕç тăман. Доксен районĕнче вăйлă взрывсем пулнă. Пушарсен тĕтĕмĕ çав портран 90 мильăран та курăнса тăнă.

ВЕНГРИ ХĂЙ РУМЫНИПЕ ВĂРÇМА ПУÇЛАНИ ÇИНЧЕН ОФИЦИАЛЬНĂЙ ЙĔРКЕПЕ ПĔЛТЕРНИ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Будапешт хулинче Венгри правительствин пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿре Венгри хăй Румыние хирĕç вăрçма пуçлани çинчен калант. Венгри правительстви Трансильванин çурçĕр пайне тытса илме Румынин право çук тесе шутлать, тенĕ. Румыни çарĕсем Çурçĕр Трансильвани чикки урлă каçса кайнă пирки Венгри командованийĕ Венгри çарне Румыни çарĕсене хирĕç çапăçма пуçлама хушрĕ, тенĕ.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 86 сехете яхăн лăпкă тăнă хыççăн, йышлах мар самолет-снарядсем сентябрĕн 5-мĕшĕнче ирхине каллех Англи çине вĕçсе пынă. Çав самолет-снарядсене Голланди çыранĕнчен вĕçтерсе янă пуль тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОНПА КĂНТАР АНГЛИРЕН ÇЫНСЕНЕ УРĂХ ÇĔРЕ КУÇАРМА ЧАРĂННĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтернĕ: Англи правительстви Пысăк Лондонран тата Кăнтăр Англирен çынсене урăх çĕре куçарма чарăнма йышăннă. Пĕлтерÿре çапла калант: самолет-снарядсем Англие тапăнас хăрушлăха сирсе янă ĕнтĕ, тенĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ХĂЙНЕ БОЛГАРИПЕ ВĂРСАКАН ÇĔРШЫВ ТЕСЕ ШУТЛАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ ПИРКИ ХЭЛЛ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарĕ Хэлл пресс-конференцире сăмах тухса калант. Вăл Совет Союзĕ Болгарие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтернине ырланă. Пĕр корреспондент Хэллтан çапла ыйтнă: Совет Союзĕ хăй Болгарие хирĕç вăрçă пуçласшăн пулни çинчен Пĕрлешÿллĕ Штатсене малтанах пĕлтерсе хунă-и?—тенĕ. Хэлл çапла калант: Совет Союзĕ ун çинчен Пĕрлешÿллĕ Штатсене вăрçă пуçласси çинчен пĕлтерес умĕн каласа пачĕ, тенĕ. Хэлл тата çакна палăртса панă: Совет Союзĕ Болгарин нейтралитетне питĕ хытă хирĕç тăчĕ, мĕншĕн тесен çав нейтралитет фашистсемшĕн усăллă пулнă, вăл фашистсене хăйсен çарĕсене Болгарирен ирĕклĕнех илсе кайма май панă. Хэлл тата çапла калант: çак ĕçе ырлас пулать, ăна вăрçăра кирлĕ пулнă пирки тунă, тенĕ.

КĔСКЕН

* Августăн 26-мĕшĕнче Осло хулинче (Норвеги) трамвай мастерскойĕнче Норвеги патриочĕсем, Гитлера хирĕç кĕрешсе, вăйлă взрыв тунă. Нимĕç оккупанчĕсем çак мастерскойра вăрçăра кирлĕ япаласем хатĕрленĕ. Унта вăрçă валли хатĕрленĕ хаклă япаласем тата оборудовани нумай пулнă. Норвеги патриочĕсем çавăн пекех тата Осло çывăхĕнчи Нюдален хулинчи абразивсем тăвакан завода тапăннă, унта та вăйлă взрыв пулнă. Ку завод та нимĕçсем валли ĕçлесе тăнă.

* Стокгольм хулинче советсен «Партизаны в степях Украины» ятлă фильмне кăтартма пуçланă. Кинотеатрсене туп-тулли халăх пухăнать. Курма пынă халăх ку фильма тăваллăн алă çупса йышăнать. Швецире тухса тăракан хаçатсем нумайĕшĕ фильма питĕ пысăка хурса мухтаса çыраççĕ. (ТАСС).

ЧАПЛĂ КУНСЕМ

Пĕрремĕш хут „таран“ тунăранпа 30 çул иртни тата пĕрремĕш хут „мертвая петля“ тунăранпа 31 çул тултарни

Сентябрĕн 8-мĕшпе 9-мĕш кунĕсем — вырăссен авиацийĕпе пĕтĕм тĕнчери авиацин историйĕнче питĕ чаплă событисем пулнă кунсем.

Вырăс летчикĕ Нестеров юлташ, самолетпа тĕрлĕ фигурăсем тума ăнăçлăн вĕренсе çитсе, 1913 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнче хăйĕн самолечĕпе тĕнчере пĕрремĕш хут «вилĕ йăлă» («мертвая петля») туса илнĕ. Вăл ăна Киевра Сырецки аэродром çинче туса кăтартнă. Вырăс летчикĕн çак хăюллă çĕнĕ утăмне вырăссен малта тăракан пайĕ ун чухнех пысăка хурса хакланă. Киеври Сывлăшра вĕçес ĕçĕн обществи Нестерова ылттăн медаль парса наградăланă. 1914 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче Нестеров капитан нимĕçсене хирĕç пынă кĕрешÿ фронтĕнче паттăр ĕç тунă. Вырăс çарĕсем тăнă вырăн тĕлне тăшманăн виçĕ самолечĕ вĕçсе пынă. Вĕсенчен пĕри ангарсене вут тивертсе яма хăтланнă. Нестеров сывлăша çиçĕм пек хăвăрт вĕçсе хăпарнă та австриецсен паллă летчикне Розентале каялла тартнă. Унтан вăл çав Розентале хăваласа çитнĕ те унăн самолетне хăйĕн самолечĕпе перĕнсе çĕмĕрсе пăрахнă. Çакă вăл тĕнчере тунă пĕрремĕш «таран» (тăшман самолетне хăйĕн самолечĕпе перĕнсе çĕмĕрни) пулнă, вăл тĕнчере пĕрремĕш хут сывлăшра çапăçни пулнă. Нестеров хăйĕн вилĕмĕпе тăшмана пĕтерсе тăкнă.

Пĕрремĕш хут «таран» туни 30 çул тултарнине тата пĕрремĕш хут «вилĕ йăлă» туса илни 31 çул тултарнине Авиацин центральнăй çурчĕ выставка уçнипе палăртать. Выставкăра Нестеровăн сăн ÿкерчĕкĕсем, вăл «вилĕ йăлă» туса илнĕ самолетăн ÿкерчĕкĕ, «вилĕ йăлă» ятлă картина (ăна Нестеров хăй тунă) пур. Выставкăра çынсем тăшман самолетне хăй перĕнсе çĕмĕрнĕ историллĕ самолетăн модельне кураççĕ. Вĕсем выставкăра тата çав вăхăтра Нестеровăн вĕçес мастерлăхĕ çинчен вырăссен тата ют çĕршывсен хаçачĕсем çырнă статьясемпе паллашма пултараççĕ. (ТАСС).

ХУЛАРИ СПАРТАКИАДА

Сентябрĕн 3—5-мĕшĕсенче Шупашкарта çăмăл атлетикăн спартакиади пулса иртрĕ. Унта хулари «Сталинец», «Динамо», «Азот», «Медик», «Спартак», «Учитель», «Большевик», «Буревестник» ятлă физкультура обществисем тата уйрăм физкультурниксем хутшăнчĕç.

Обществăсенчен 1-мĕш вырăна «Сталинец», 2-мĕш вырăна «Динамо», 3-мĕш вырăна «Медик» йышăнчĕç.

Пĕчченшерĕн чупса мала тухас енĕпе хĕрарăмсенчен Маркова («Буревестник») мала тухрĕ, вăл 100 метра (13 минута та 9 секундăра, 800 метра 2 минута та 40,5 секундăра чупса тухрĕ; арçынсенчен Солдатченко («Сталинец») мала тухрĕ, вăл 800 метра Г2 минута та 5 секундăра чупса тухрĕ; 2-мĕш вырăна Горяинов («Сталинец») йышăнчĕ.

Граната ывăтассипе 1-мĕш вырăна Пахлова («Азот») тата Солдатченко, 2-мĕш вырăна Глущенко («Сталинец») йышăнчĕç.

Çÿле сикессипе 1-мĕш вырăна Солдатченко, 1-мĕшпе 2-мĕш вырăна Пановăпа Малютина («Сталинец») йышăнчĕç.

Сăнă ывăтассипе Маркова («Буревестник»), 24 метр та 60 сантиметр ывăтса, 1-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Инçене сикессипе Солдатченко, 5 метр та 90 сантиметр сиксе, 1-мĕш вырăна, Никитин («Спартак»), 5 метр та 54 сантиметр сиксе, 2-мĕш вырăна йышăнчĕ.

1.500 метр чупассипе Капитонов («Динамо») мала тухрĕ, вăл 1.500 метра 4 минута та 53 секундăра чупса тухрĕ.

Эстафетăра хĕрарăмсем 100 метр, арçынсем 200 метр чупрĕç. 100 метр чупассипе 1-мĕш вырăна «Сталинец», 2-мĕш вырăна «Буревестник» обществисем, 200 метр чупассипе 1-мĕш вырăна «Сталинец», 2-мĕш вырăна «Динамо» обществисем йышăнчĕç.

Спартакиадăра 1-мĕш вырăн йышăннă обществăсемпе уйрăм физкультурниксене Республикăри физкультурăпа спорт комитечĕн хисеплĕ грамотипе наградăлаççĕ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Чăваш АССР Прокуратуринче

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени государствăна тырă памалли тата колхозниксене аванс шучĕпе тырă валеçмелли йĕркесем çинчен калакан пунктне пăснăшăн Элĕк районĕнчи «Хăват» колхоз председательне Емельянова 5 çуллăха, Комсомольски районри «Красное Сормово» колхоз председательне Ярлыгина 3 çуллăха тĕрмене хупса усрамалла тунă. Закона пăсса, Емельянов 28,68 центнер, Ярлыгин 7,25 центнер тырă салатнă пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: метала хĕртмесĕр ĕçлес ĕçе пĕлекен инженерсемпе техник-технологсем тата экономистсем, плановиксем, бухгалтерсем, контора ĕçлекен служащисем (бухгалтер ĕçне вĕренме учениксене те илеççĕ); токарьсем, слесарьсем, штамповщиксем, прессовщиксем, электромонтерсем, литейщиксем, сварщиксем тата ытти рабочисем те (çак ĕçсене вĕренме учениксене те илеççĕ); строительствăра ĕçлекен рабочисем— платниксем, столярсем, штукатурсем, кăмака тăвакансем, малярсем, грузчиксем, лавçăсем тата подсобнăй рабочисем (çаксене общежитине вырăнаçтараççĕ).

Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков. Кашни кун 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

5—3

Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ уйрăм çынсемпе организацисенчен сыпман улмуççи çинче пулнă панулмисем, шăлан çырли, пилеш, палан, кăмпасем, тĕрлĕ çырласем йышăнать. Çав япаласене паракансене конфет йышши таварсем, тăвар, супăнь тата ытти продуктсем те парать. Адрес: г. Чебоксары, ул. Совхозная, 1.

Медицина работникĕсен хисеплĕ тивĕçĕ

Вăрçă вăхăтĕнче медицина работникĕсем хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Фронтра тата госпитальсенче ĕçлекен врачсемпе медицина сестрисем аманнă боецсемпе офицерсене пулăшас тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсен пархатарлă ĕçне пула, аманнисенчен 80 процент таран каялла строя таврăнаççĕ. Фронтри медицина работникĕсенчен тылра ĕçлекен медицина работникĕсем те юлмаççĕ. Вĕсем халăх сывлăхне сыхлассишĕн тÿрĕ кăмăлпа, пĕтĕм вăя хурса тăрăшаççĕ.

Пирĕн республикăри райсовет тата хула совет исполкомĕсен сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен отделĕсен, больницăсен, врач участокĕсен работникĕсем, хăйсен вăрçă вăхăтĕнчи задачисене тĕрĕс ăнланса илсе, больницăсемпе амбулаторисен ĕçне чылаях лайăхлатма пултарчĕç. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи больница (главнăй врач Е. Комиссарова юлташ) ĕçĕсене илсе пăхар. Унта мĕнле чирпе чирленине хăвăрт пĕлес тесе, лабораторипе анлăн усă кураççĕ, ялти условисенчех юн ярас ĕçе йĕркеленĕ. Больница работникĕсем тăрăшнипе районра кĕçĕ чирне пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтернĕ. Врач Комиссарова юлташ пуçарнипе, чирлĕ çынсене сыватнă çĕрте вырăнти япаласемпе анлăн усă курассине йĕркеленĕ.

Пăрачкав районĕнчи Сиявăри больницăра та (главнăй врач Волкова юлташ) чирлĕ çынсене лайăх пăхаççĕ. Чирлисене апат çитерме продуктсем пуринчен ытла больница çумĕнчи подсобнăй хуçалăхран илеççĕ. Больница çурчĕсене пĕтĕмпех юсанă, хĕле валли вутă çителĕклĕ хатĕрленĕ. Волкова юлташ хăйĕн участокне кĕрекен медицина учрежденийĕсене лайăх ертсе пырать. Улатăр районĕнчи Киреря врач участокĕнчи (заведующийĕ Скворцова юлташ) санитари уполномоченнăйĕсем кашни пилĕк кунтах хăйсен ĕçĕсем çинчен врача пĕлтерсе тăраççĕ. Вĕсем тăрăшнипе вăрманти общежитисене санитари тĕлĕшĕнчен лайăх тытса усрамалла тунă.

Шупашкарти ача çуратмалли çурт (главнăй врач медицина наукисен кандидачĕ Гутман юлташ) республикăри лайăх ĕçлекен медицина учрежденийĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнче вăл хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатрĕ. Çуралнă ачасем вилессине, 1942 çулхипе танлаштарсан, виçĕ хут чакарнă. Кăçал çуралнă ачасем вилни пачах та пулман. Унта ача амăшĕсене сыватас ĕçре лайăх майсемпе анлăн усă кураççĕ. Иртнĕ çулта 155 çынна юн янă, кăçал вара çур çул хушшинчех 187 çынна юн янă. Çуртсене санитари тĕлĕшĕнчен таса тытаççĕ. Ачасем çуратмалли çурт работникĕсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ участокра та начар мар ĕçлеççĕ.

Республикăри мĕнпур больницăсемпе амбулаторисемшĕн Шупашкарти поликлиника (главнăй врач медицина наукисен кандидачĕ Осипов юлташ) ĕçĕсем пример пулса тăраççĕ. Вăл вăрçă çулĕсенче чирлĕ çынсене сыватас тата чир-чĕр сарăлассинчен сыхланас тĕлĕшпе нумай пысăк ĕçсем пурнăçа кĕртнĕ. Унта çултан-çулах участоксене санитари тĕлĕшĕнчен тĕрĕслесси, варвитти чирĕнчен сыхлама уколсем тăвасси, чирлисене килтех пулăшу парасси ÿссе пырать.

Шупашкарти ача больници те (главнăй врач Заиконникова юлташ) хăйĕн ĕçне чылаях лайăхлатрĕ. Вăл больницăра медицина работникĕсене пысăк квалификациллĕ врач—медицина наукисен кандидачĕ Фадеева юлташ ертсе пырать. Унта ачасене чиртен сыватас ĕçе лайăх йĕркеленĕ, вилекенсен процентĕ икĕ хут чакнă.

Калас пулать, медицина учрежденийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те чылай-ха. РСФСР Совнаркомĕ 1944 çулхи мартăн 3-мĕшĕнче йышăннă постановленире юлашки вăхăтра халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçĕн пахалăхне япăхлатнине палăртнă. Мĕнле чирпе чирленине палăртасси кирлĕ вырăнта мар, кабинетсемпе, уйрăмăнах рентген кабинечĕсемпе, лабораторисемпе çителĕксĕр усă кураççĕ, шăл чирĕнчен сыватас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Чирлисем патне врачсем чĕнсен час пымаççĕ. Чылай больницăсенче чирлисене пăхас, апатлантарас ĕçе начар йĕркеленĕ. Хăшпĕр учрежденисенче тивĕçлĕ тасалăх тата йĕркелĕх çук.

Çапла, Элĕк районĕнчи больницăра (главнăй врач Киясов) чирлисене начар çитереççĕ, тасалăх йĕркисене пăсаççĕ. Больницăна юсама панă укçа-тенкĕрен 4-мĕш пайĕпе кăна усă курнă. Больницăн обществăллă санитари инспекторĕсем сахал мар, анчах вĕсемпе никам та ĕçлемест. Санитари паспорчĕсене тирпейсĕр çыраççĕ. Районра трахомăран сыватас тата кĕçĕ чирне пĕтерес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Кувакино районĕнчи амбулатори (главнăй врач Ермолаева юлташ) хăйĕн участокĕнчи медицина учрежденийĕсене ертсе пымасть, санитари инспекторĕсене çухатса пĕтернĕ.

РСФСР Совнаркомĕ сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен организацисене чирсенчен сыватас ĕçе тата санитари ĕçне татăклăнах лайăхлатма хушрĕ. Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисене тивĕçлĕ йĕркене кĕртмелле, чирлисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтермелле тăвас пулать. Çавăнпа пĕрлех медицина работникĕсен пурнăç условийĕсене те лайăхлатмалла. Медицина работникĕсен кулленхи тивĕçĕ — партипе правительство шанса панă ĕçре тÿрĕ кăмăлпа, вăя шеллемесĕр ĕçлесси пулать.

Юлашки вăхăтра Совет Союзĕнчи хăшпĕр облаçсенче врачсен съезчĕсем пулса иртрĕç. Паян Шупашкарта ялти участоксенчи врачсен республикăри съезчĕ уçăлать. Унта медицина ĕçĕнчи вăтам работниксем тата трахома чирĕнчен сыватас тĕлĕшпе ĕçлекен сестрасем пулаççĕ. Съезд сентябрĕн 13-мĕшĕччен пырать. Вăл ялта пурăнакан халăха медицинăпа санитари тĕлĕшĕнчен пулăшас ĕçе мĕнле йĕркелени тата çав ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тумалли çинчен Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕн докладне, чылай участоксенчи врачсен доклачĕсене сÿтсе-явать. Вĕсемсĕр пуçне, съезда пухăннисем ятарласа чĕннĕ профессорсен доклачĕсене итлеççĕ.

Съездра сÿтсе-явма лартнă ыйтусем пысăк. Вĕсем ялта санитари культурине çÿлти пусăма çĕклессишĕн обществăллă юхăма вăйлатас тĕлĕшпе, санитари инспекторĕсен ĕçне лайăхлатас, вĕсене конкретлă ертсе пырас, практикăллă ĕçре пулăшас тĕлĕшпе участокри врачăн санитарипе профилактика тĕлĕшĕнчи ĕçĕсене чирлисене сыватас ĕçпе таччăн çыхăнтарса пырас тĕлĕшпе, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене тата çар çыннисен çемьисене сыватас ĕçе лайăхлатас, трахомăпа кĕçĕ чирне пĕтерес, малярипе чирлессине чакарас, сарăлакан чирсенчен сыхланас, туберкулеза пĕтерессишĕн кĕрешессине вăйлатас, промышленность предприятисенчи рабочисен сывлăхне сыхлас ĕçе лайăхлатас тата СССР Верховный Совет Президиумĕ 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче ача амăшĕсемпе ачасене пулăшасси çинчен йышăннă Указа кăтартуллăн пурнăça кĕртес тĕлĕшпе тăракан ыйтусем пулаççĕ. Уйрăмăнах ачасемпе ача амăшĕсен сывлăхне сыхлас енĕпе тимлĕн ĕçлемелле.

Иккĕленмелли çук, Чăваш республикинчи медицина работникĕсем — врачсем, фармацевтсем, фельдшерсем, акушеркăсем, медицина сестрисем тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, ирсĕр тăшмана çĕмĕрсе тăкасшĕн татах та лайăхрах ĕçлесе, хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслăн пурнăça кĕртĕç.

А. ЛИХАЧЕВ.
Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительăн секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00677. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59X42 и. л. Тираж 16.000 экз.